КУЛЬТУРА

«Куракана каламалли нумай...»

/Вёçё. Пуçламăшё 1, 5-мёш стр./.

Çак тёлёшрен хама телейлё тесе шухăшлатăп. Кашни çулах тёрлё роль выляма тӳр килнё, халё те çаплах. «Хирёçле» сăнарсенчен мана М.Горькин «Старик» пьесинчи Хёр сăнарё килёшетчё. Питё путсёр хёр, çапах та эпё ăна кăмăллăсах выляттăм, мёншён тесен унăн иртнё тертлё пурнăçё куç умне тухса тăратчё.

Çапах та чуна çывăххисем – трагедиллё сăнарсем.

– Ку енёпе Сирён чылай ёçёр пирки чарăнса тăма пулать. Паллă критиксем те хăйсен шухăшёсене палăртнă. Акă Фаина Романова Федерико Гарсиа Лоркăн «Юнлă туйё» пирки çапла çырнă: «...Мёнле илемлё Амăшё – В.Кузьмина хăйён ывăлне юратнипе. Мăнаçлăскер, кăраскер, никама пăхăнманскер ун çумёнче вăл телейпе, мăнаçлăхпа çиçет. Вăл пурнăçа малалла тăсассишён – тӳрккесле айванлăхёпе мăнукёсем пирки ёмётленет. Çав вăхăтрах çак мăнаçлă та вăйлă хёрарăмра çав тери усал туйăм, амăшённи пек мар хаярлăх – Леонардо раттине курайманлăх çунать. Хивре, кăрăс хусканусем, шăтарасла витёр пăхни, кинжалпа çав тери хăрушă усă курни – пурте пур унра. Çак курайманлăх унăн ăс-тăнне хупланă тата ывăлне пётернё. Хăюллă, таса, пёлсе вылять актриса çак кăткăс роле». Хăвăр мёнле йышăнатăр çав сăнара?

– Кунти амăшё – çёр çынни, кил хуçи хёрарăмё. Ытла та пысăк инкек йăтăнса анать ун çине: малтан чыспа тивёçшён упăшкипе аслă ывăлё пуç хураççё, каярах – кёçён ывăлё пӳкле вилет. Çапах та ман героиня шалти кăмăлтуйăмне уçать, инкекпе терт витёр шăранакан пысăк юратăва мухтать.

– Эсир калăпланă тепёр сăнар пирки те чарăнса тăмаллах. Сăмах Борис Чиндыков драмипе лартнă «Çатан карта çинчи хура хăмла çырли» спектакль пирки. Эсир унта каллех – Амăшё. Орел хулинче иртнё «Раççейри чи лайăх спектакльсем» театр фестивалёнче спектакль çёнтерӳçё пулнăччё.

– Фестивальте кăтартнă ёçсене сӳтсе явма çёр-шыври паллă театр критикёсем, искусствоведсем хутшăннă. Çын ёмёрё кёске те черченкё пулнине палăртать спектакль, хуйха-суйха парăнмасăр, йывăрлăхсене çёнтерсе, юратупа тасалăхшăн кёрешсе пурăнма хистет Амăшё.

– Сирён рольсем пёринчен тепри тёлёнмелле, пур енёпе те çӳлти шайра. Пин тёрлё çыннăн кăмăлне ёмёр тăрăшшёпех хăвăрăн сăн-питёре, ӳтёре, чунăра кёртнё, асапне, тарăхăвне, савăнăçне, телейне тимленё. Ф.Гарсиа Лорка пьесипе лартнă «Арçынсăр хёрарăм» ёçри Бернарда та вăйлă хёрарăмсен сăнарёсенчен пёри. Чăваш театрё 2003 çулта Мускавра гастрольте пулнă чухне ăна пăхма СССР халăх артистки Вера Васильева ятарласа пынăччё. Унăн шухăшне пёлес тесе эпё те Вера Кузьминичнăпа курса калаçнăччё. Акă мён тенёччё вăл: «Вера Кузьмина испан хёрарăмёсен шăпине тёрёс выляса кăтартать. «Вылять» тени вырăнлах мар-ха, Бернарда пурнăçне вăл хăйён чёри витёр кăларать... Вера Кузьмина пултарулăхёпе тахçанах кăсăкланатăп. Вăл калăпланă кашни сăнар чуна пырса тивет, асра юлать. Бернарда та çав шутрах».

– Вера Васильева çёр-шыври паллă актрисăсенчен пёри. Пустуй сăмах çаптаракан çын мар вăл. Эпё те ун пултарулăхё умёнче пуçăма таятăп.

Бернарда сăнарё пирки çакна каланă пулăттăм: драмăра пин-пин çул татса пама пултарайман ыйтусем – пусмăрлăхпа ирёклёх, çын тата унăн шăпи, пурнăç тата вилём – хуçаланаççё. Бернарда вара çав авăрта çунать, тёрёс çул суйласа илме майсем тупаймасть.

● *«Çылăх». Плаки.*

– Çак сăнарпа та Эсир палăрма пултартăр. 2005 çулта Хусанта тёрёк халăхёсен Пётём тёнчери «Наурус» фестивалёнче «Чи лайăх хёрарăм сăнарё» номинацире пёрремёшё пултăр. Борис Чиндыков Сирён валли ятарласа çырнă «Хура чёкеç» монодрамăпа Чăваш академи драма театрён сцени çинче çеç мар, «Стамбул – уçă хутлăх» Пётём тёнчери театр фестивалёнче те палăрнă. Сцена çинче пёр-пёччен тăратăр. Хăвăрăн сăмахăрсемпе, вăхăт-вăхăт ик куçран шăпăртатса анакан куççулёпе пирён аслă тата мăнаçлă çёр-шывăн – Атăлçи Пăлхарăн вăйне кăтартатăр. Çак спектакле хăвăр мёнле хаклатăр?

– Моноспектакль вăл – питё кăткăс япала. Вăй-хал тёлёшёнчен çирёп пулмалла, ёçе пётём чуна памалла. Маншăн вăл тăван халăхăм умёнче тытакан экзамен пекех пулчё.

– Юлашки вăхăтри рольсенчен хăшё чуна çывăх?

– Александр Пăрттан «Укçа чул кастарать» ёçёнчи Алтӳк сăнарё. Паянхи пурнăç пăтăрмахёсем кăшлаççё ун чунне. Укçашăн тем тума та хатёр иккен пёр тăван тёпренчёкёсем. Чун панă амăшне çаратма та хатёр. Мён пулса иртет пирёнпе, чуна мёнле упраса хăвармалла? Çакăн пирки чан çапмалла пирён паян.

– Вера Кузьминична, Сирён сассăра пысăк экранпа та илтме май пурччё. Хăш кинофильма чăвашлатма хутшăннă Эсир?

– 1952 çулта кинофильмсене чăвашла куçарса, артистсене пухса, чăвашла калаçтарма пуçларёç /дубляж/. Малтанласа чăнах та ёçлеме питё йывăрччё, ун чухне техника тёлёшёнчен те чаплах пулман.

Чи малтанах çак ёçе Свердловскри киностуди пуçларё. Эпир, чăваш артисчёсем, хёрсе кайсах ёçе пуçăнтăмăр. Сăмахран, «Чужая родня» фильмри Мордюкова вылякан роль, «Овод», «Разные судьбы», «Педагогическая поэма», «Сорок первый», «Коммунист», «Судьба человека», «Чистое небо», «Простая история» тата нумай фильмри геройсене чăвашла калаçтарнă.

Кайран çак ёçе Хусан киностуди тума пуçларё. В.Алфер, М.Антонов, Л.Трифонов режиссерсем нумай тăрăшрёç çак кăткăс ёçре. Халё вара çав ёç пăчланчё. Укçа çукки пирки пуль.

Кино-дубляжа явăçтарнăшăн савăнатăп, çакă пултарулăха пуянлатать, хăвна тепёр енчен кăтартма май парать.

Пурё 300 кинофильма чăвашла калаçтарнă пуль. Тен, ытларах та. Нумайăшёнче эпё калаçнă.

– Ачалăхри кёрхи тата хёллехи каçсем куç умне тухаççё. Çав тапхăрăн илемё – Чăваш радио паракан спектакльсемччё. Унтанпа мён чухлё шыв юхса иртнё, тем тёрлё савăнăç пулнă, анчах та çав самант, туйăм чи пысăк телей шутланнă. Пире телей кӳрекенёсенчен пёри Эсир пулнă.

– Чăннипех, манăн пурнăçра Чăваш радио пысăк вырăн йышăнать. Мускавран вёренсе килсен мана радиона Куçма Чулкаç чённёччё. Эпё сăвăсем вулама пуçларăм. Унтан Валентина Элпи ачасем валли кăларăмсем хатёрлеме хутшăнтарчё. Унтан Петр Андреев калавсем те, сăвăсем те питё нумай вулаттарчё. Геннадий Терентьевпа «Салампи» повеçе çыртарнăччё. Ун пекки мён чухлё пулман-ши? Аса илмелли, каласа кăтартмалли тем те пур.

– Кинопа телекурав аталанса пынă май театр хакё, пёлтерёшё чакать тенине те илтме пулать...

– Ку шухăш тёрёс мар. Халăх юратăвё вăл вёçсёр-хёрсёр тинёс пекех. Ун юратăвё театр валли те, телекурав валли те – чăн-чăн искусствăн пур енё валли те – çитет. Вăйлă, калама çук вăйлă театр искусстви. Халăха çывăх шухăш-кăмăлёпе, халăхран вёренсе пынипе.

– Вера Кузьминична, сумлă çак çула çитсе те Эсир тăтăшах çул çинче. Йăлăхмастăр та-и? Ывăнмастăр та-и?

– Мёншён йăлăхас? Ёçё çапла-çке пирён. Чылай вăхăт çула тухмасан тем çитмен пек туйăнать. Чун питё те туртать инçетри ялсемпе хуласене. Хама ирёксёрлесе çула тухни нихăçан та пулман. Çанталăк çинчен те, автобусё киввисённи çинчен те шухăшласа тăман гастроле пуçтарăннă чух. Пёр шухăш çеç пулнă, халё те пёр шухăш: халăх кётет, халăх умне вăхăтра тухмалла.

– Мён вăй парса тăрать Сире?

– Хăв ёçлекен театра халăх епле юратнине, ăна шаннине куратăн та – лайăхрах та лайăхрах ёçлес, ăсталăхпа вăй-хала ӳстерсех пырас килет. Пурин те çавăн пек кăмăл-туйăм. Çавна пула çёкленет те театр пултарулăхё. Халăх пурнăçне, унăн савăнăçёпе хуйхи-суйхине хăв чёрӳне йышăнса ăна халăха тавăрса пама пёлни – акă вăл актер искусстви. Пире халăх сцена çине тухса кулса тата йёрсе кăтартма пёлнёшён мар, чун-чёре вăйне çёклеме пултарнăшăн юратать. Театртан вăл çав вăйпа тухса каясшăн. Каять те, енчен те актер сцена çинче чăннипех пурăнчё пулсан.

Çут çанталăкпа çывăх пулма тăрăшатăп. Пахчана каятăп та юмана ыталаса тытатăп, вăл е ку роле тума вăй пама ыйтатăп.

– Актер ӳсёмё – унăн чун тăрăмё теççё. Чунăрта йёркеллё-и?

– Йёркеллех пек. Анчах вăхăт-вăхăтпа кичемлёх пусса лартать: çавна тума ёлкёреймерём, кăна пурнăçлаймарăм. Çак самантсенче ёçре çăлăнăç шыратăп. Питё чаплă рольсем пулнă-çке манăн...

Çулё вёçленмен-ха. Куракана каламалли те нумай. Май килё-ши – пёлместёп, çапах шанатăп.

■ **Надежда СМИРНОВА**
калаçнă



● *«Кай, кай Ивана» спектакльрен. Кётерук – В.Кузьмина, Йăкăнат – Е.Никитин.*

● ➡ *11, 12 стр.*

ХЫПАР

Хам куртăм!

Суйкăнсем суймаççĕ

Асăннă ял епле пуçланса кайнине тĕрлĕрен ăнлантараççĕ. Пĕрремĕшне вара "суяс" сăмахпа сыхăнтараççĕ. Вăрманта пытаннă япа хыççă пуçтарма килнисем: "Эсир камсен пулатăр?" – тесе ыйтнă-мĕн. "Эсир хăвăр вара ăçтисем?" – çийĕнчех тĕпченĕ хресченсем. Вĕсем Пăва уесĕнчен пулнине пĕлсен: "Эпир Улатăр уесне пăхăнатпăр", – тенĕ. Улатăр уесĕнчисем килсе тухсан вара Пăва уесĕнчисем тесе çирĕплетнĕ. Çапла майпа – суеçтерсе – вĕсем налук тӳллессинчен хăтăлнă. Кунта пурăнакансем суйма ăста пулнăран ялне те Суйкăн теннĕ. Вулаканăм тĕшмĕртеймерĕ пулĕ-ха, сăмахăм Улатăр районĕнчи Суйкăн пирки.

● *"Хĕвел" ушкăн – Кĕр сăринче.*

Шунер хĕрринче

Çав вăхăтрах асăннă яла Патăрьел тăрăхĕнчи Алманчăран куçса килнĕ виçĕ пĕр тăван – Айтар, Турай тата Суйкан – пуçарнă тесе çирĕплетеççĕ тавра пĕлӳçĕсем. Суйканĕ сĕм вăрмана вĕсенчен маларах килсе тĕсенĕ имĕш. Илемлĕ уçланка асăрханă. Юхан шыв хĕрринче çӳллĕ, сарлака хыр çитеннĕ. Ватă хыра тата шыва Киремет вырăнĕ тесе палăртнă. «Эпĕ вилсен кунта çурта çутăр, чӳк тăвăр: «Тав тăватпăр сана, Суйкан, тесе калăр», – çапла пиллесе хăварнă вăл Суйкăнсене. Ял çыннисем унăн халалне пурнăçланă. Çулсем иртнĕçемĕн хыр хăрнă, апла пулин те халăх çак вырăна манман, тунката патĕнче пулсан та – чӳк йăли-йĕркине туса ирттернĕ. Аваллăхран паянхи куна таврăнар-ха. Паян Суйкăнсем Киремет вырăнне çӳремеççĕ ĕнтĕ, чӳк те манăçнă. Ял варринче – тахçан вăл айккинче пулнă – тĕне кĕмен чăвашсен масарĕ. Сăмах май, вăл Чăваш Республикинчи истори палăкĕ шутланать. Сăвăплă çав вырăна эпĕ те çитсе куртăм. Вăл икĕ çырма варрине тăрса юлнă халĕ. Пĕринче Шунер /тĕне кĕмен чăваш ячĕ, ялта Шунер йăхĕсем пурăнаççĕ/ шывĕ шăнкăртатать. «Теприн вырăнĕнче авал вилесене масар çине илсе пымалли çул пулнă. Каярах шыв-шур çĕре илсе кайнăран çырма пулса юлнă. Шыв-шур вăйлă çулсенче çыран ишĕлет те вилнисен шăммисем, пуç купташкисем тухаççĕ. Тимĕр çĕçĕсем, хĕрарăм капăрлăхĕсене тупни те пулнă. 1965 çулта кунта çĕçĕ, пăхăртан тунă çĕрĕ, кĕмĕл уçсем тухни паллă»,– пĕлтерчĕç Суйкăнсем. Халĕ масар вырăнĕнче тĕмескесем çеç юлнă. Нухрат шыракан çамрăксем кунта темиçе те килнĕ-мĕн, чылай вырăна та чавса пăхнă.

«Çĕнĕ арманта» пулă ĕрчетеççĕ

Маларах кайса çакна та калам. «Суя çур пурнăç», – теççĕ пулин те паян Суйкăнсем «шăнман пăр çине лартса ямаççĕ». Апла пулин те килен-каяна тӳрех пĕтĕм вăрттăнлăха уçмаççĕ. Асăрханулăх тени вĕсен авалтанах упранса юлнă пулас. Хăйсен пирки «шăтăкри ял» тесен кӳренеççĕ! «Эпир тахçанах çутта тухнă, çĕнĕлле пурăнатпăр», – тесе хирĕлеççĕ. «Ялта 360 çурт, 350-шĕнче пин ытла çын пурăнать, – паллаштарать Суйкăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Иван Котмаков.– Выраннти «Пламя» хуçалăх 2005 çулта салăннă хыççăн фермерсен йышĕ ӳснĕччĕ. 15 те çитнĕччĕ. Пĕлтĕртен вара ялта виçĕ фермер кăна юлчĕ. Ялти вăй питти арçынсем вăрманпа ĕçлеççĕ: пура, строительство материалĕ хатĕрлеççĕ. Хамăр тăрăхрисен саккасне кăна мар, Чул хулапа Мускавăнне те пурнăçлаççĕ. Новгород, Рязань облаçĕсене те ĕçлеме çӳреççĕ. Унта хамăр ялсем маларах кайса вырнаçнă та ентешĕсене манмаççĕ. Хĕрарăмсем те питĕ правур. Кашни килти хуçалăхрах иккĕшер, виçшер ĕне. Пирĕн енче асăннă выльăх шучĕ чакман. Паянхи куна Суйкăнра майракаллă шултра выльăх – 475 пуç. Ялта виçĕ кĕтӳ. Юлашки вăхăтра выльăхсене черетпе кĕтеççĕ. Маларах кĕтӳçсем тытатчĕç. Вăкăр самăртса сутаççĕ. Вĕсене пухма тутарсем килеççĕ. Ялта сурăхпа качака та йышлă. Сысна çăвăрлаттарса çурисене сутаççĕ. Чăх-чĕп, хур-кăвакалăн шучĕ те çук. Сĕте икĕ усламçă пуçтахать. Шел, хамăр çынсем мар. Литршăн 15 тенкĕ кăна параççĕ. Хамăрăннисем яваплăхран шикленеççĕ. Суту-илӳ ĕçне пур чухне те пуçарма çăмăлах мар. Сăнатăп та – аслă çул хĕрринчи ялсенче пурăнакансемех урăхларах. Вĕсем пахчинчи юлашки чечекне те тухса сутаççĕ. Пирĕн вара ытларах чухне – ахалех параççĕ».

● *Иван Котмаков.*

Суйкăнсем харпăр хăй çĕрĕсенче çĕр улми сутлăх та туса илеççĕ. Выльăх нумай тытнăран вĕсен тислĕк çителĕклĕ, пахча çимĕç ăнса пулать. Кăçал, сăмахран, «иккĕмĕш çăкăра» – 1125, ытти пахча çимĕçе 450 тонна пухса кĕртнĕ. «Кашни килте урапаллă 2-3 трактор, утă хатĕрлемелли, пухса кӳртмелли агрегатсем, вăрман ĕçĕнче усă курмалли хатĕрсем пур. Кашни хушма хуçалăхрах – электричествăпа ĕçлекен арман. Кил хуçи хĕрарăмĕсем вăрмана çырла-кăмпана, милĕк касма, сиплĕ курăк пухма çӳреççĕ. Вăрман пуянлăхне Улатăр пасарĕнче сутаççĕ. Телефонпа шăнкăравласа саккас паракансен ыйтăвĕсене те пурнăçлаççĕ», – каласăва хутшăнать ялти вулавăш «хуçи» Светлана Кольцова. Светлана Петровна пĕлтернĕ тăрăх – Суйкăнсем хурт-хăмăрçăсем, сунарçăсем, пулăçăсем. Хăшĕ-пĕри 70 вĕлле таранах тытать иккен. Хĕрарăмсем те утарçăсем. 8 теçетке çула хыçа хăварнисем те «ылттăн хурта» пăхса йăпанаççĕ. Авал Хура Пасна шывĕнче /вăл Суйкăнран инçех мар юхать/ шыв арманĕ йышлă пулнă. Юлашки шыв арманĕ ларнă вырăна вĕсем Çĕнĕ арман теççĕ. Унта ял халăхĕ пĕве пĕвеленĕ. Пулă ĕрчетеççĕ. Владимир Мигурин маттур ар пуçарăвĕпе ял хушшинче те пĕве чавнă. Унта ял çыннисем вăлтапа пулă тытаççĕ.

Сывлăш кăна мар, шыв та таса пултăр

Иван Котмакова паян халăх шучĕ чакманни те хĕпĕртеттерет. «Кăçал 13 пепке çут тĕнчене килнĕ. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле вĕсен йышĕ тата хушăнасса кĕтетпĕр. Кăçал 1-мĕш класа 11 ача кайрĕ. Пĕлӳ çуртĕнче – 154 вĕренекен. Суйкăн шкулĕ пĕлӳ шайĕне те, хăтлăхĕне те районта чи лайăхсисен йышĕнче. Çамрăксем те яла юлаççĕ. Çемье çавăрса пурăнма, ачапчана ӳстерме условисем вак. Культура çурчĕ, вулавăш, ФАП, 5 лавкка, банкомат пур, кредит кооперативĕ те хамăр патăмăртах. Халăх Улатăра каймасăрах çăмăллăх кредичĕсем илме пултарать. Шупашкар та Кивĕ Эйпеç урлă тӳрĕ çула хута янă хыççăн пирĕншĕн сывăхланчĕ. Тĕп хуларан Суйкăна куллен пĕчĕк автобус çӳрет. Унăн çул каялла вара вăл канмалли кунсенче кăна килетчĕ. Нумаях пулмасть ял варринче часавай туса партрăмăр. Иккĕмĕшĕ – шкул çывăхĕнче. Унта шыва кĕмелли вырăн та /купель/ пур. Çăл куç патĕнче илемлĕ пусă хăтларăмăр. Кăçал Мускав проекчĕпе чиркӳ капитрăмăр. Ăна Раççейри асап тӳснĕ çветтуйсен ячĕпе çыхăнтартăмăр. Пирĕн тăрăха Первомайски поселокĕнче хăй вăхăтĕнче колони пулнă. Унта нумай пачăшкăна персе пăрахнă. Вĕсенчен пĕрне çветтуйсен шутне те кĕртнĕ. Çитес çул Суйкăнра чиркӳ комплексне хута яма ĕмĕтленетпĕр. Унта вырсарни шкулĕ уçасшăн. Чăваш культурин музейне тăвассăн. Хальлĕхе пирĕн экспонатсем шкулти тавра пĕлӳ музейĕнче упранаççĕ. Культура ĕçченĕсене ялти ватăсеннен авалхи япаласене пухма явăçтарасшăн. Кинемейсен пир тĕртмелли станоксем те, ытти ĕç хатĕрĕ те упранса юлнă. Манăн тепĕр тĕп тĕллев – масара каякан урама асфальт сартарасси»,– хавхаланса каласрĕ Иван Петрович.

Аякри ял çыннисен чи çивĕч ыйтăвĕ – район центрне, Шупашкара çитсе килесси. Улатăра – 45, тĕп хулана 200 ытла çухрăм. Енчĕке самаях сӳхетме тивет. «Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-90-мĕш çулĕсенче ял çыннисем эрех вăйлă ĕçетчĕç. Хĕрарăмсем те унăн серепине лекнĕччĕ. Пашалăх ял çыннине килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллăх кредичĕ пама пуçласан нумай çемьере арçынсем ĕçме пăрахрĕç. Кредит илни дисциплинăна çирĕплетрĕ. Халăх яваплăха туйма пуçларĕ. Эпир ĕçкĕпе иртĕхекенсене тĕрĕс çул çине тăма пулăшатпăр. Каргинсене, сăмахран, ашшĕ-амăш ирĕкĕнчен хăтармах патне çитнĕччĕ. Халĕ пăхатăп та – вĕсем çурт çĕклеççĕ. Иккĕшĕ те ĕçлеççĕ, çăмăл машинăпа çӳреççĕ. «Хурçă ут» та пур. Чун хĕпĕртет. Халăх аван пурăнать халĕ. Çуртсене шыв кĕртеççĕ. Кĕпе çумалли машинăсемпе усă кураççĕ. Пӳртрех – туалет, ваннăй. Пĕр сăмахпа, хулари пекех.

Пирĕн тăрăхра ĕçмелли шыв начар. Специалистсем палăртнă тăрăх – унта акшар /известь/ нумай. Çавăнпа халăх чирлет. Чылайăшĕн пӳрере, ват хăмпинче чул «пухăнать». Тĕлĕнмелле те, анчах ку амакпа ытларах хĕрарăмсем аптăраççĕ», – терĕ Иван Петрович.

Çапла вара, çын сывлăхĕшĕн атмосфера таса пулни кăна мар, шыв пахалăхĕ те питĕ пĕлтерĕшлĕ. Шыв начар тесе урăх çĕре каяймăн. Вĕтăва кирек епле пулсан та вырăнтах татса пама тивет.

Типĕтнĕ хĕрлĕ кăшманран – сăра

Суйкăнри ватăсем паянхи кунченех чăваш кĕписемпе çӳреççĕ. Чăвашла хитре, таса калаçаççĕ. Вĕсем пупленине итленĕçемĕн итлес килет.

Чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕнче Суйкăнсем ялти культура çуртĕнче чăвашсен ĕлĕкхи уявне – Кĕр сăри ирттернĕ. Малтанах культура «вучахĕн» директорĕ Елена Чернова пухăннисене мăн асатте-асанне ку праçника епле ирттерни пирки каласа панă. Ăна кĕрхи ĕçсене вĕçленĕ хыççăн йĕркеленĕ. Сĕтел çине çĕнĕ тырăран авăртнă çăнăхран пĕçернĕ çавра çăкăрпа чăкăт тата пичкепе сăра лартнă. Кашнине сăра ас тивме сĕннĕ. Праçник вăхăтĕнче чӳк тунă, вилнисене пуç тайнă, çĕнĕ тыр-пула сăваплама ыйтнă. Ырă та пуян тухăçлăн тав туса кĕлĕ вуланă. Çак йăлана йĕркелесе ирттеричен пĕр çын та çĕнĕ тыр-пула тытма хăяйман.

Уяв кĕреки валли Суйкăнсем те çăкăр, кукăль, хуплу пĕçернĕ. Ĕлĕкхи йăлапа çĕнĕ салатран, çĕнĕ хăмларан сăра вĕретнĕ. «Эпир кăçал пухнă вăрман çимĕçне те, йӳçĕтнĕ пан улмине те сĕтел çине лартатпăр. Сăрана вара кашни хăйĕн рецепчĕпе тăвать. Пыл сăри те, кăрчама та пур. Чылайăшĕ ăна хĕрлĕ кăшманран вĕретет. Асăннă пахча çимĕçе тураса кăмакара лайăх типĕтеççĕ. Кайран ăна сăра вĕретнĕ сĕре ярасçĕ. Унăн тĕсĕ вара питĕ хăйне евĕр пулать»,– пĕлтерет Елена Михайловна.

Халĕ Суйкăнсем чăваш культурин кунне хатĕрленеççĕ. Улатăр районĕнчи виçĕ чăваш ялĕ – Кивĕ Эйпеç, Çĕнĕ Эйпеç тата Суйкăн – темиçе çул ĕнтĕ пĕрле ирттереççĕ ăна. Унта чăваш йăли-йĕркине, культурине упрас енĕпе ăна маттуррине палăртаççĕ. Уява пурте чăваш кĕпи тăхăнса пырать. Концерт лартаççĕ, алă ăстисен куравне хатĕрлеççĕ, чăваш апат-çимĕçне пĕçереççĕ. Çак уява ачасемпе çамрăксене те явăстараççĕ. Ырă çак йăла-йĕркене вĕренсе юлччăнне теççĕ. «Хĕвел» фольклор ушкăнне çӳрекенсем сцена çине асламăшĕкукамăшĕ арчинчи ĕлĕкхи чăваш кĕпипе тухаççĕ. Суйкăна тĕне кĕмен чăвашсем пуçарнă. Вĕсен хăшĕпĕр йăли-йĕрки паянхи кунччнеех упранса юлнă. Асăннă ялта пурăнакансем Çимĕке анлăн палăртаççĕ. Кĕçнери кун ирхине Çимĕк мунчи кĕреççĕ. Çав кунах масар çине каяççĕ. Питраврa така пусаççĕ, хура çырла кукăлĕ янтăлаççĕ. Вилнисене така пуçĕне сăйлама масар çине васкаççĕ. Мăн кунра та 2-3 кун савăнаççĕ.

Суйкăнсем чăваш çыравçисен хайлавĕсене те вулама кăмăллаççĕ. Светлана Кольцова пĕлтернĕ тăрăх – кунта 750 вулакан. «Телевизорпа ыррине питех кăтартмаççĕ», – тесе ватăсем те вулавăша кăштăртатса çитеççĕмĕн. Ялта «Хыпар» Издательство çурчĕн тĕрлĕ хаçат-журналне çырăнса илеççĕ. Шел, вĕсен йышĕнче «Хыпар» сахалрах. «Эпир унти статьясемпе Интернетра пулăшатпăр. Вулавăшра та пур вăл»,– çапла сыв пуллашрĕç манпа Суйкăнсем.

■ **Роза ВЛАСОВА**

Уяв

Шăмăршăсем пĕрле пуçтарăнсан...

Шупашкарти трактор тăвакансен культура керменĕнче Шăмăршăсен ентешĕхĕн уявĕ иртнĕ. Фойере Шăмăршăсене Пуянкассинчи «Ахаяс» фольклор ансамблĕ юрласа, ташласа кĕтсе илнĕ. Кунтах асăннă районтан тухнă паллă çынсен сăн ӳкерчĕкĕсен галерейине тата алă ăстисен куравне йĕркеленĕ.

ЧР Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн ертӳçи, Шăмăршăсен ентешлĕхĕн председателĕ Анатолий Ухтияров доклад тунă, халĕччен пурнăçланă ĕç-хĕлпе паллаштарнă. Спортпа массăллă мероприятисене хастар хутшăнакан, халăхра сывă пурнăç йĕркине саракансене тав çырăвĕсемпе чысланă.

Радик Егоров ентешĕсене Шăмăршăсен спортри çитĕнĕвĕсем пирки каласа панă. КПСС Шăмăршă парти райкомĕн 1-мĕш секретарĕнче, ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн секретарĕнче ĕçленĕ Иван Пугачев пухăннисене район аталанăвĕ, культурăпа вĕренӳ сферинче çĕнĕ объектсем хута кайни пирки каласа панă. Зоя Романова-Филиппова куçаруçа та /сăмах май, вăл «Хура çăкăр» романа вырăсла куçарнă/ сăмах илнĕ. Хальхинче вăл Илпек Микулайĕн «Тимĕр» романне куçарса хатĕрленĕ. Ăна сыравçăн юбилейĕ тĕлне пичетлесе кăларасшăн.

Малашне Шăмăршăсен «Хĕрлĕ хырлăх» общество организацине Светлана Яковлева юрăçă ертсе пырĕ. Уява эстрада концерчĕ пуянлатнă. Светлана Яковлевăпа унăн ывăлĕпе хĕрĕ те сцена çине юрлама тухнă. Юлашкинчен пурте «Ахаяс» ансамбльне пĕрле ура хуçса ташланă.

■ **С.РОЗОВА**

Пулăм

Часавай уçни – пысăк савăнăç

Чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕнче православи тĕнне ĕненекенсем Михаил архистратиган тата тӳпери ӳт-пӳсĕр ытти пирĕштин пĕрлехĕн кунне палăртаççĕ. Ку уяв Елчĕк районĕнчи Тип Тимеш ялĕн престол уявĕ шутланать. Кăçалхи праçник асăннă ялта пурăнакансемшĕн нумайлăха асра юлĕ: Михаил архистратиг ячĕпе хăпартнă часавая шăпах çав кун савăнăçлă лару-тăрура уçрĕç.

● *Юрий Карпов тата Виктор Смирнов.*

Ку часавая Канаш тата Тăвай епископĕ Стефан сăвапларĕ. Çак ятпа йĕркеленĕ кĕлĕсене IV округăн благочинныйĕ Александр Сенькин протоиерей тата округ клирикĕсем хутшăнчĕç. Стефан епископ ял çыннисене паллă пулăм ячĕпе саламларĕ, сăваплă ĕçе хутшăннисене çирĕп сывлăх суннĕ, пурне те пил пачĕ.

Ку часавая Виктор Смирнов – вăл Тип Тимешре çуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнать – пуçарăвĕпе тума пуçланă. Çынсем ялта чиркӳ пулманран православи уявĕсенче кĕлĕсене çӳрейменни, хăйсен тата тăванĕсен сывлăхĕшĕн çурта лартайманни пăшăрхантарнă ăна. «Ватăсене кӳршĕ ялти чиркĕве кайса çӳреме кансĕртерех. Унсăр пуçне çамрăксем турра ĕненччĕр, хамăрăн йăла-йĕркене тата несĕлĕмĕрсене хисеплеме пуçлаччăр, усал йăласемпе ан туслашчăр тесе Тип Тимешре часавай хăпартас шухăш çуралчĕ», – каласа кăтартать Виктор Анатольевич. Вăл хăйĕн ĕмĕчĕ пирки Шупашкарта пурăнакан ентешĕсене пĕлтернĕ. Ку шухăша СССР спорт мастерĕ, кире пуканĕ йăтакансен республикăри федерацине ертсе пыракан Юрий Карпов, Юрий Лукиянов ырласа йышăннă, йĕркелӳ комитечĕ туса хунă. Часавайăн проектне тытарнă, кадастр ыйтăвĕсене татса панă. Пуçаруçăсем каланă тăрăх – ял çыннисем малтан ку шухăша иккĕленерех йышăннă. Çак ĕç мĕн тери сăваплă та пархатарлă пулнине вĕсене ял старости Алексей Иванов ăнлантарнă, савна май выраннти халăх та хăйĕн тӳпине хывас тесе укçа пуçтарма тытăннă. Ниме мелĕпе никĕсне янă, стенисене кирпĕчрен купалана. Çынсем стройка ĕçĕсене те, çак выраннă тирпей-илем кĕртмешкĕн те хутшăннă. «Часавай купола вырнаçтарсан ĕçсем кал-кал каймa тытăнчĕç. Турă хăй те пулăшса пыма пуçларĕ», – теççĕ В.Смирновпа Ю.Карпов.

Чăваш Енĕн тĕп хулинче пурăнаççĕ пулин те чун-чĕрипе тăван ялтах вĕсем. Акă Юрий Карпов пысăках мар Тип Тимешре хытă сийлĕ çул пултăр тесе нумай тăрăшнă. Вăл çине тăнипех Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисене асăнса лартнă палăка юсаса çĕнетнĕ. Ĕмĕчĕсем татах та пысăкха Юрий Михайловичăн: часавай тавра ӳрешленĕ карта тытасшăн вăл, йывăçсем лартасшăн. «Тăван ялăма сыхласа хăварса малалла аталантарас килет. Халăх ватăлса ан кайтăр, çамрăксем тăван тăрăхрах юлччăр тесе тăрăшатпăр. Чăн та, юлашки вăхăтра ялти 2-3 çурта хулара пурăнакансем туянчĕç. Малашне çак туртăм вăйлансах пытăрччĕ», – чунне уçать кире пуканĕ йăтакансен федерацийĕн ертӳçи.

Вырăнти халăх часавай уçнăшăн питĕ кăмăллă. «Малашне пире Михаил архистратиг сыхласа тăтăрччĕ, яланах пулăшса пытăрччĕ, яла усал-тĕселе ан кĕрттĕрччĕ. Эпир халĕ унăн хӳттинче», – савăнăçне пытармарĕç Тип Тимешсем.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем

25 тунти кун

1 КАНАЛ
5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «УБИТЬ СТАЛИНА» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Познер» 16+
1.10, 3.05 Х/ф «ИСТОРИЯ РЫЦАРЯ» 12+
3.45 «Вышел ежик из тумана» 12+

РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.40 «О самом главном»
10.25 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00 Т/с «СЕМЕЙНЫЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВА» 12+
17.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ - 10» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ШЕРЛОК ХОЛМС» 12+
22.50 Х/ф «ПРИКЛЮЧЕНИЯ ШЕРЛОКА ХОЛМСА И ДОКТОРА ВАТСОНА. СОБАКА БАСКЕРВИЛЕЙ»
1.45 2.05 Х/ф «ЗАТЕРЯННЫЕ В КОСМОСЕ» 16+
4.35 Комната смеха

ЧТВ
6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия
На канале «Россия 2»
6.30-7.00 Страна спортивная. Чувашия

Россия К
7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
10.15 «Наблюдатель»
11.15 Х/ф «СЛУЧАЙНАЯ ВСТРЕЧА»
12.25 «Линия жизни»
13.20, 21.35 Д/ф «Мне 90 лет, еще легка походка...»
14.15 Т/с «ОЧАРОВАНИЕ ЗЛА»
15.05 Д/ф «Гюстав Курбе»
15.10 Д/ф «Безумие Патума»
15.50 Х/ф «ПОВЕСТЬ О ЧЕЛОВЕЧЕСКОМ СЕРДЦЕ»
18.05 Анне-Софи Муттер и Ламберт Оркис. Соната №1 для скрипки и фортепиано Иоганнеса Брамса
18.40 Academia
19.45 Главная роль
20.00 «Сати. Нескучная классика...»
20.45 Д/ф «Египет. Тайны, скрытые под землей»
22.30 Д/ф «Лао-цзы»
22.40 «Тем временем»
23.55 Х/ф «ГИБЕЛЬ СЕНСАЦИИ»
1.30 Д/ф «Васко да Гама»
1.40 Концерт из произведений Андрея Эшпая
1.45 «Мировые сокровища культуры»

НТВ
6.00 «НТВ утром»
8.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ШЕФ-2» 16+
21.25, 23.35 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
0.30 Т/с «СТРЕЛЯЮЩИЕ ГОРЫ» 16+
1.35 «Лучший город Земли» 12+
1.45 2.30 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ВОСКРЕСЕНЬЕ В ЖЕНСКОЙ БАНЕ» 16+
5.00 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

ТВЦ
6.00 «Настроение»
8.30 Х/ф «У ТИХОЙ ПРИСТАНИ» 12+
9.55, 21.45 Петровка, 38 16+
10.10, 11.50 Х/ф «СУВЕНИР ДЛЯ ПРОКУРОРА» 12+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
12.25 «Постскриптум» 16+
13.25 «В центре событий» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 Городское собрание 12+
16.00 Х/ф «СЕМНАДЦАТЬ МГНОВЕНИЙ ВЕСНЫ» 12+
17.50 «Найти хозяина» 12+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «СЧАСТЛИВЧИК ПАШКА» 16+
22.20 Х/ф «МИСТЕР МОНК. ДЕФЕКТИВНЫЙ ДЕТЕКТИВ» 12+
23.10 Без обмана. «Кто делает еду?» 16+
0.00 События. 25-й час
0.35 «Футбольный центр»
1.05 «Мозговой штурм. Будущее без антибиотиков?» 12+
1.35 Х/ф «ЧИСТО АНГЛИЙСКОЕ УБИЙСТВО» 12+
3.30 Х/ф «ОТЕЦ БРАУН» 16+
5.25 «Осторожно, мошенники!» 16+

РЕН
5.00, 16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
6.00 М/с «Бэтмен» 6+
6.30, 13.00 Званый ужин 16+
7.30 «Смотреть всем!» 16+
8.00, 12.00, 23.50 «Экстренный вызов» 16+
8.30, 12.30, 19.00, 23.30 «24» 16+
9.00 Д/ф «Оружие Третьей мировой» 16+
14.00, 15.00 «Семейные драмы» 16+
18.00 «ВЕРНОЕ СРЕДСТВО» 16+
19.30 Т/с «БЕЗ СРОКА ДАВНОСТИ» 16+
20.30 «Военная тайна» 16+
0.10, 3.10 Т/с «ПОСЛЕДНЯЯ МИНУТА» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ
07.00 «Ваше утро» /0+/
07.05 «Время вкуса» /6+/
18.30 «Республика» информаци кăларăмĕ
18.45 «Илемпи урокĕсем» /0+/
19.00 «Туслăх йывăçĕ» /12+/
19.30 «Республика» информационная программа /12+/
19.45 «По существу» /12+/
20.00 «Правовое поле» /12+/
20.30 «Акилбупсер» /6+/
23.00 «Республика» информаци кăларăмĕ
23.15 «Республика» информаци программи
23.45 «Правовое поле» /12+/

Чăваш Наци радиовĕ
6.05-6.30, 7.00-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.00-8.30 Голос Республики. (12+) 9.00-9.30, 17.05-17.30,18.05-18.30, 20.05-20.30, 21.05-21.30, 23.05-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Ялтан яла (12+) 9.30-10.00 Социальный вопрос (12+) 10.30-11.00 Шурăм пуç. (12+) 11.05-12.00 Пĕччен мар. (12+) 12.00-14.00. Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 16.30-17.00. Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+). 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу.(12+) 20.30-21.00 Радиобиблиотека. (12+) 21.30-22.00 Ӳнер тӳпинчи вĕçев. (12+) 22.05-23.00 Янра, юрă! (хит-парад) (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8-8.05, 9.00-9.05, 10.00-10.05, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10
Тунти кун – Эрне кун
6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00 22.00 - Хыпарсем. (12+) 8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

Чăваш радиовĕ
6.10 Анонс передач
6.15 События
6.27 Паттăрлăх
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Домашняя библиотека
7.33 Паянхи кун
7.37 Çула тухсан
7.51 Мы - вместе
7.58-8.00 Погода
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Чĕрĕ шыв
18.39 Каçхи юмах
18.49-19.00 Вести-Чувашия

26 ытлари кун

1 КАНАЛ
5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «УБИТЬ СТАЛИНА» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 Х/ф «В ОДНОМ ШАГЕ ОТ ТРЕТЬЕЙ МИРОВОЙ» 12+
1.10 Х/ф «ПОМЕЧЕННЫЙ СМЕРТЬЮ» 16+
3.05 Х/ф «ДЖЕССИ СТОУН: РЕЗКОЕ ИЗМЕНЕНИЕ» 16+

РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.40 «О самом главном»
10.25 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00 Т/с «СЕМЕЙНЫЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВА» 12+
17.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ - 11» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ШЕРЛОК ХОЛМС» 12+
22.55 Специальный корреспондент 16+
23.55 Х/ф «ПРИКЛЮЧЕНИЯ ШЕРЛОКА ХОЛМСА И ДОКТОРА ВАТСОНА. СОКРОВИЩА АГРЫ»
1.25 «Тайны Первой Мировой войны: Голгофа Российской империи» 12+
2.30 Т/ф «БОЛЬШАЯ ИГРА»
4.00 Комната смеха

ЧТВ
6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость /на чувашском языке/
9.25-9.40 Пора по домам
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

Россия К
6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
10.15 «Наблюдатель»
11.15, 1.55 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 18.40 Academia
12.55 «Пятое измерение» Авторская программа Ирины Антоновой
13.25 Д/ф «Марина Цветаева. Роман ее души»
14.05 Т/с «ОЧАРОВАНИЕ ЗЛА»
14.50 Д/ф «Лао-цзы»
15.00 «Сати. Нескучная классика...»
15.50, 20.45 Д/ф «Египет. Тайны, скрытые под землей»
16.35 Д/ф «Игорь Сикорский. Чертежи судьбы»
17.15 «Мировые сокровища культуры»
17.30 «Мировая элита фортепианного искусства» Даниэль Баренбойм
19.45 Главная роль
20.00 Власть факта. «Будни Политбюро»
21.30 Д/ф «Атомная бомба для русского царя. Владимир Вернадский»
22.15 Д/с «Запечатленное время». «Четвероногие астронавты»
22.45 «Игра в бисер»
23.55 Х/ф «ХАРЧЕВНЯ В ШПЕССАРТЕ»
1.30 И. Штраус. Не только вальсы
2.00 2.45 Д/ф «Гюстав Курбе»

НТВ
6.00 «НТВ утром»
8.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ШЕФ-2» 16+
20.45 Футбол. Лига чемпионов УЕФА. «Зенит» (Россия) - «Атлетико» (Испания)
22.55 Т/с «ШЕФ- 2» 16+
23.35 «Сегодня. Итоги»
23.55 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
0.55 Т/с «СТРЕЛЯЮЩИЕ ГОРЫ» 16+
1.55 Квартирный вопрос 0+
3.00 Т/с «ВОСКРЕСЕНЬЕ В ЖЕНСКОЙ БАНЕ» 16+
5.00 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

ТВЦ
6.00 «Настроение»
8.35 Х/ф «СУРОВЫЕ КИЛОМЕТРЫ» 6+
10.25 Д/ф «Жанна Болотова. Девушка с характером» 12+
11.10, 21.45 Петровка, 38 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «НЕМОЙ» 16+
13.40 Без обмана. «Кто делает еду?» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 «Большая вода Амура» 12+
15.30 Х/ф «СЕМНАДЦАТЬ МГНОВЕНИЙ ВЕСНЫ» 12+
16.55 «Доктор И...» 16+
17.50 «Истории спасения» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «СЧАСТЛИВЧИК ПАШКА» 16+
22.20 Х/ф «МИСТЕР МОНК. ДЕФЕКТИВНЫЙ ДЕТЕКТИВ» 12+
23.10 Д/ф «Удар властью. Галина Старовойтова» 16+
0.00 События. 25-й час
0.35 Х/ф «КАМЕНСКАЯ» «УБИЙЦА ПОНЕВОЛЕ» 16+
2.40 Х/ф «СУВЕНИР ДЛЯ ПРОКУРОРА» 12+
4.30 Д/с «ЭВОЛЮЦИЯ ЖИЗНИ НА ЗЕМЛЕ» 6+
5.05 «Дом вверх дном» 12+

РЕН
5.00 Т/с «ПОСЛЕДНЯЯ МИНУТА» 16+
6.00 М/с «Бэтмен» 6+
6.30, 13.00 Званый ужин 16+
7.30 «Смотреть всем!» 16+
8.00, 12.00, 23.50 «Экстренный вызов» 16+
8.30, 12.30, 19.00, 23.30 «24» 16+
9.00 Д/ф «Звезды на службе» 16+
14.00, 15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «ВЕРНОЕ СРЕДСТВО» 16+
19.30 Т/с «БЕЗ СРОКА ДАВНОСТИ» 16+
20.30 «Территория заблуждений» 16+
22.30 «Пища богов» 16+
0.10, 2.50 Х/ф «ИДЕАЛЬНЫЙ МИР» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ
06.00 "Республика" информаци кăларăмĕ /6+/
06.15 «Илемпи урокĕсем» /0+/
06.30 «Республика» информационная программа
07.00 «Ваше утро» /0+/
18.30 "Республика" информаци кăларăмĕ
18.45 "Тĕплĕ калаçу" /12+/
19.00 "Ылтăн çӳпçерен" /12+/
19.30 "Республика" информационная программа
19.45 «Изменим мир» /12+/
20.00 "Качество" /12+/
20.30 "Пошептушки" /0+/
20.45 "Местное самоуправление" /12+/
23.00 "Республика" информаци кăларăмĕ
23.15 «Тĕплĕ калаçу» /12+/
23.30 «Республика» информационная программа
00.00 «Качество» /12+/

Чăваш Наци радиовĕ
6.30-7.00 Наши великие земляки. (12+). 7.00-8.00 Чуна уçнă самант. (12+) 8.05-9.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 6.05-6.30, 9.05-9.30 10.05-10.30, 11.05-11.30,17.05-17.30, 18.05-18.30, 19.05-19.30, 20.05-20.30, 21.05-21.30, 23.30-24.00 Юрă вăчăри. (12+) 9.30-10.00 Социальный вопрос. (12+). 10.30-11.00. Тĕплĕ калаçу. (12+) 11.30-12.00 Ӳнер тӳпинчи вĕçев. (12+) 12.05-14.00 Радиотеатр. (12+) 14.05-15.00 Янра, юрă! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.05-16.30 Эстрадный концерт. (12+) 16.30-17.00, 23.05-23.30 Присягая Родине. (12+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 Чемпион. (12+) 20.30-21.00 Радиобиблиотека. (12+) 21.05-21.30 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 21.30-23.00 СССР халăх артистчĕ В.К. Кузьмина 90 çулта. (12+)
Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10,10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10,15.05-15.10, 16.05-16.10,17.05-17.10,18.05-18.10,19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Чăваш радиовĕ
6.10 Вести-Чувашия
6.24 Анонс передач
6.26 Паттăрлăх
6.40 Столичный курьер
6.54 Пĕр сăвă
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Вести-Чувашия
7.23 Паянхи кун
7.27 Будьте здоровы
7.37 Тӳсĕм
7.47 Олимпийские горизонты
7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Остров молодых
18.39 Каçхи юмах
18.49-19.00 Вести-Чувашия

27 юн кун

1 КАНАЛ
5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «УБИТЬ СТАЛИНА» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Политика» 18+
1.10, 3.05 Х/ф «ПЕРО МАРКИЗА ДЕ САДА» 18+
3.45 «Александр Зацепин. «В огнедышащей лаве любви...» 12+

РОССИЯ 1
5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.40 «О самом главном»
10.25 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
16.00 Т/с «СЕМЕЙНЫЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВА» 12+
17.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ - 11» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ШЕРЛОК ХОЛМС» 12+
22.55 «Когда наступит голод» 12+
23.50 Х/ф «ПРИКЛЮЧЕНИЯ ШЕРЛОКА ХОЛМСА И ДОКТОРА ВАТСОНА. СОКРОВИЩА АГРЫ»
1.20 «Сотворить монстра. Советские франкенштейны» 12+
2.20 Вести. Дежурная часть. СПЕЦРАССЛЕДОВАНИЕ 16+
2.55 Т/ф «БОЛЬШАЯ ИГРА»
4.20 Комната смеха

ЧТВ
6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

Россия К
6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
10.15 «Наблюдатель»
11.15, 1.55 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 18.40 Academia
12.55 Красуйся, град Петров!
13.25 «Больше, чем любовь»
14.05 Т/с «ОЧАРОВАНИЕ ЗЛА»
14.50 Д/ф «Бенедикт Спиноза»
15.00 Власть факта. «Будни Политбюро»
15.50 Д/ф «Египет. Тайны, скрытые под землей»
16.35 Д/ф «Александр Тихомиров. И внутрь души направлю взгляд»
17.15, 22.00 «Мировые сокровища культуры»
17.30 «Мировая элита фортепианного искусства» Альфред Брендель
18.15 «Русская верфь»
19.45 Главная роль
20.00 «Абсолютный слух»
20.45 Д/ф «Рим. Тайны, скрытые под землей»
21.30 Гении и злодеи. Вильгельм Канарис
22.15 Д/с «Запечатленное время». «Одиссея «Челюскина»
22.45 Д/ф «Смыслы Бориса Гребенщикова»
23.55 Х/ф «ПРИВИДЕНИЯ В ЗАМКЕ ШПЕССАРТ»
1.30 «Пир на весь мир»
2.00 2.45 Д/ф «Франц Фердинанд»

НТВ
6.00 «НТВ утром»
8.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ШЕФ-2» 16+
20.45 Футбол. Лига чемпионов УЕФА. ЦСКА (Россия) - «Бавария» (Германия)
22.55 Т/с «ШЕФ- 2» 16+
23.35 «Сегодня. Итоги»
23.55 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
0.55 Т/с «СТРЕЛЯЮЩИЕ ГОРЫ» 16+
1.55 «Лига чемпионов УЕФА. Обзор»
2.25 Главная дорога 16+
3.00 Т/с «ВОСКРЕСЕНЬЕ В ЖЕНСКОЙ БАНЕ» 16+
5.00 Т/с «ЧАС ВОЛКОВА» 16+

ТВЦ
6.00 «Настроение»
8.30 Х/ф «ДЕВУШКА С ГИТАРОЙ» 6+
10.20 Д/ф «Сны и явь Михаила Жарова» 12+
11.10, 21.45 Петровка, 38 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «НЕМОЙ» 16+
13.40 Д/ф «Удар властью. Галина Старовойтова» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 «Наша Москва» 12+
15.30 Х/ф «СЕМНАДЦАТЬ МГНОВЕНИЙ ВЕСНЫ» 12+
16.55 «Доктор И...» 16+
17.50 Линия защиты 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.55 Х/ф «ОПЕРАЦИЯ «ГОРГОНА» 12+
22.20 Х/ф «МИСТЕР МОНК. ДЕФЕКТИВНЫЙ ДЕТЕКТИВ» 12+
23.10 «Хроники московского быта. Звезду на нары» 12+
0.00 События. 25-й час
0.25 «Русский вопрос» 12+
1.15 Х/ф «СУРОВЫЕ КИЛОМЕТРЫ» 6+
3.05 Д/ф «Три смерти в ЦК» 12+
4.10 Д/с «ЭВОЛЮЦИЯ ЖИЗНИ НА ЗЕМЛЕ» 6+
4.55 «Дом вверх дном» 12+

РЕН
5.00 Х/ф «ИДЕАЛЬНЫЙ МИР» 16+
5.30 «Дальние родственники» 16+
6.00 М/с «Бэтмен» 6+
6.30, 13.00 Званый ужин 16+
7.30, 11.00 «Смотреть всем!» 16+
8.00, 12.00, 23.50 «Экстренный вызов» 16+
8.30, 12.30, 19.00, 23.30 «24» 16+
